1906 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи февраль уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи августăн 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

245/26651/ № Юнкун, 2014, декабрь/раштав, 24 Хакĕ ирĕклĕ www.hypar.ru


*Пĕри – сухапуçпа, çиччĕн – кашăкпа* 2


*Ял библиотеки халăха питĕ кирлĕ* 3


*«Ачасене, халăха питĕ юрататăп...»* 4

## Ыйтса çырсан кăна парĕç

***Универсаллă электрон карттисене /УЭК/ 2017 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен граждансем хăйсем ыйтса çырсан кăна парĕç. Тивĕçлĕ саккун проектне РФ Патшалăх Думи декабрĕн 16-мĕшĕнче йышăннă. Федераци Канашĕ ырланă хыççăн саккун проектне Раççей Президентне алă пусма парĕç.***

Маларах саккунпа килĕшӳллĕн 2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен карттăсене мĕнпур гражданина, çав шутра УЭК пама ыйтса çырманнисене те парассине çирĕплетнĕччĕ. Халĕ УЭКа обязательнăй йĕркепе парассине тата икĕ çула каяраха хăвараççĕ – 2017 çул пуçламăшĕччен.

Чăваш Енре паян 13,1 пин ытла çын УЭК илнĕ, ăна пама ыйтса 18,7 пин ытла çын çырнă. Ыйтусене е УЭК парассине хирĕçлесе çырнисене ятарлă 12 пунктра йышăнаççĕ. Вĕсем Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле хулисенче, Муркаш тата Шупашкар районĕсенче вырнаçнă.

УЭК тытăмне федерацин тăватă /идентификаци, банк приложенийĕсем, ОМС полисĕ, СНИЛС/ тата регионăн пĕр /транспорт приложенийĕ, ăна карттăра 2013 çулхи апрельтен пуçласа çыраççĕ/ приложенийĕ кĕреççĕ. Карттăпа Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти троллейбуссенче, Чăвашавтотрансăн пассажирсене илсе çӳрекен транспортĕнче, Çĕнĕ Шупашкарти 11, 12, 14, 15, 20, 20к, Шупашкарти 30, 31, 32, 33, 35, 36, 40, 41, 42, 43, 44, 45, 46, 47, 54№ маршрутлă таксисенче, Шупашкар хули çумĕнчи 626, 265.1, 511э, 555, 112, 536№ маршрутлă таксисенче усă курма пулать. Палăртни вырăнлă: общество транспорчĕпе /троллейбусра, автобусра тата маршрутлă таксире/ çӳремелли хак укçан мар тӳленĕ чухне 1 тенкĕ йӳнĕрех, хула çумĕнчи транспортра – кашни километршăн 30 пус йӳнĕрех.

Чăваш Енре УЭКăн транспорт приложенийĕн балансне 24 терминалта, 45 банкоматра укçа хушма пулать, çавăн пекех 20 пунктра укçана оператор йышăнать. Кăмăл пулсан УЭКа çавăн пекех электронлă мелпе алă пуснине кĕртеççĕ, вăл документсене алă пусма, патшалăхăн пулăшу ĕçĕсен пĕрлехи порталĕ урлă пулăшу ĕçĕсемпе усă курма май парать.

Çакна та палăртмалла: Чăваш Ен универсаллă электрон карттине ĕçе кĕртес енĕпе лидер-регионсен шутне кĕрет. «УЭК» АУО рейтингĕн кăтартăвĕсем тăрăх – республика 34,85% танлашакан кăтартупа иккĕмĕш позицие йышăнать. Рейтинга тĕп кăтартусене – йышăннă заявленисен, панă карттăсен шутне тата ыттине – кура палăртаççĕ.

**Н.ЯКОВЛЕВ**

# Ишек пасарĕнче ветеринарсем ĕçе пикеннĕ

## Аш-какай пахалăхне тĕрĕсленĕ

***Республика Пуçлăхĕ М.Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисемпе муниципалитет органĕсен ертӳçисемпе иртнĕ канашлура килти хуçалăхра туса илнĕ паха апат-çимĕçе ялхуçалăх пасарĕсенче сутма кансĕрлекен бюрократи чăрмавĕсене пĕтерме хушнă.***



– Ял çыннисем продукци пахалăхне çирĕплетекен справкăпа ветеринар пĕтĕмлетĕвне илме райцентра çӳресе вăхăт çухатнăшăн ӳпкелеççĕ. Вĕсене пасарти лабораторирех е ял тăрăхĕнчи ветпунктрах пама пулать. Пирĕн пĕчĕк бизнеса чăрмавсăр аталанма май туса памалла, – тенĕ **Михаил Игнатьев.**

– Унăн хушăвне пурнăçласа Шупашкар районĕнчи Ишек ял тăрăхĕнчи «Ишек пасарĕ» обществăн канмалли кунсенче ĕçлекен ярмăрккинчи ветеринари-санитари экспертизин лабораторине ветспециалистсем çирĕплетрĕмĕр, – пĕлтерчĕ ЧР патшалăх ветеринари службин ертӳçи **Сергей Скворцов.** – Вĕсем декабрĕн 20-21-мĕшĕсенче ĕçе пикенчĕç. Кӳршĕ районсенчен илсе килнĕ выльăх, кайăк-кĕшĕк, апат-çимĕç документĕсене, Шупашкар районĕнчи ялсенчен илсе килекен продукци пахалăхне тĕрĕслеççĕ. Иртнĕ çулсенче кунта ветврач ĕçленĕ, юлашки вăхăтра пулман. Пасар администрацийĕ вăрăм павильон хута ячĕ – выльăхран илекен аш-какайпа юрвара сутма лайăхланчĕ.

Продукцие ветеринар свидетельствипе /2-мĕш форма/ тата справкипе /4-мĕш форма/ çирĕплетсен çеç пасарсенче сутма ирĕк параççĕ. Çав документсене выльăх, кайăк-кĕшĕк, апат-çимĕç илсе килекен çын пурăнакан район-хулари ветслужба парать. Малтан вĕсене пасарсене ăçтан тиесе кайнине, ял тăрăхĕсенчи выльăх чирĕсен, ветеринари-санитари лару-тăрăвне тĕпчет.

– Пĕр чăхха сутма Ишек пасарне кайиччен те ветслужбăн вырăнти уйрăмĕнчен документ çырса пама ыйтмалла, – ăнлантарчĕ Сергей Иванович. – Раççей Ялхуçалăх министерствин 2006 çулхи «Ветеринарин пĕрле илсе каймалли документĕсене çырса парас тĕлĕшпе пурнăçламалли ĕç йĕркине çирĕплетесси çинчен» 422-мĕш хушăвĕпе килĕшӳллĕн ветеринари свидетельствипе /2-мĕш форма/ справки /4-мĕш форма/ продукци, выльăх, кайăк-кĕшĕк, выльăх апатне турттарса кайнăранпа сутма, упрама вырăна илсе çитернĕ кунччен çеç вăйра тăраççĕ. Çĕнĕ справкăсăр, киввипе пасара ан кайăр. Ветврач сире каялла ярĕ.

– Сутлăх аша ССР Союзĕн 1983 çулта йышăннă ветеринари-санитари тĕрĕслевĕ ирттермелли йĕркипе килĕшӳллĕн экспертиза витĕр кăларатпăр, – пĕлтерчĕ Шупашкар районĕнчи выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци ертӳçи **Сергей Ефремов.** – Сăмахран, килти хуçалăхсенчен илсе килнĕ кайăк-кĕшĕк ашне пасарта сутма ирĕк париччен ветспециалист какай чăннипех те документ илсе пынă çыннăн пулнине çирĕплетме ял тăрăхĕн администрацийĕ çирĕплетнĕ справкăна тишкерет. Пасар ĕçленĕ кунсенче аша экспертиза витĕр кăларать, хăй çак ĕçе пурнăçланине çирĕплетме талон парать.

Ветврач продукци пахалăхĕ пирки иккĕленсен апат-çимĕç тĕслĕхне тĕрĕслеме аккредитациленĕ лабораторие çитерет. Унта бактериологи, биохими, микробиологи тĕрĕслевĕ ирттереççĕ. Ветеринари-санитари экспертизи йĕркелесе этем сывлăхне хăрушлăха кĕртекен чир тупса палăртмасан продукцие павильонсенче сутма ирĕк параççĕ.

Раççей Правительствин 2006 çулхи «Продукципе пĕрле ветеринари документĕсем парса ярас ĕç йĕркине çирĕплетесси çинчен» хушăвĕпе килĕшӳллĕн ветеринари документĕсене алла илмесĕр апат-çимĕçе, выльăхпа унăн апатне, кайăк-кĕшĕке, аш-какая е сĕт юр-варне пĕр ял тăрăхĕпе район-хуларан тепĕрне турттарса кайма юрамасть.

Республика Пуçлăхĕ хушнипе ыйтăва çийĕнчех татса пачĕç. Ӳлĕм Шупашкар районĕнчи Янăш, Чăрăшкасси, Кăшавăш, Çĕньял-Покровски, Ишек, Ишлей, Атайкасси, Лапсар ял тăрăхĕсенчи çынсем справка илме продукцие, выльăха е кайăк-кĕшĕке Кӳкеçри ветстанцие илсе каймĕç, тӳрех Ишек пасарне çул тытĕç. Ветспециалист аша çийĕнчех тĕрĕслесе сутлăха кăларма ирĕк парĕ.

**Юрий МИХАЙЛОВ**

ÇУРТ-ЙĔР

# Коммуналлă пулăшушăн татăлмалли йĕрке улшăнчĕ

## Çулла – сахалрах, хĕлле нумайрах тӳлĕпĕр

***Çынсене хӳтĕлес тĕллевпе патшалăх тарифсене çеç мар, коммуналлă пулăшушăн /унăн калăпăшĕпе тĕсĕ улшăнман чухне/ хывмалли тӳлеве те йĕркелесе тăрать. Федерацин 2013 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕн пурăнмалли çурт-йĕр кодексне тата хăш-пĕр саккун актне улшăнусем кĕртесси çинчен» 417-мĕш саккунĕпе килĕшӳллĕн коммуналлă пулăшушăн çынсене тӳлеттерекен укçа виçине ытлашши ӳстересрен чикĕлемелли йĕркене çирĕплетнĕ. Унта сăмах мĕн пирки пырать-ха?***

Раççей Правительстви федерацин кашни субъекчĕ валли асăннă пулăшу тӳлевĕн виçине улăштармалли индекссем çирĕплетет. Федераци Правительствин 2014 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнчи 718-мĕш хушăвĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Енре индекс ӳсĕмĕ вăтамран 4,6 процентпа танлашать. Хăш-пĕр муниципалитетра çав шайран 2,3 процент ӳсме пултарать. Çав хушăва пурнăçласа республикăра коммуналлă пулăшу тӳлевĕн виçине кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен вăтамран 6,9 процентран ытла ӳстермен. Çакна та палăртмалла: муниципалитет йĕркеленĕвĕнче производство-инвестици программине е концессиллĕ килĕшӳ çирĕплетме тата коммуналлă инфратытăма аталантаракан программăсене çирĕплетнĕ, çурт-йĕре хутса ăшăтмалли нормативсем улшăннă тăк /халăх суйлакан органсемпе килĕштерсен/ индекс 6,9 процентран ытларах пулма пултарать.

Республика Пуçлăхĕ кăçалхи майăн 17-мĕшĕнче маларах асăннă 417-мĕш саккуна, 718-мĕш хушăва тата федераци Правительствин 2014 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнчи 400-мĕш йышăнăвне тĕпе хурса «Чăваш Республикинчи муниципалитет йĕркеленĕвĕсенче çынсем коммуналлă пулăшушăн хывакан тӳлев виçин индексĕсем çинчен» 65-мĕш указ кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2018 çул вĕçлениччен 296 муниципалитет йĕркеленĕвĕнче çынсем коммуналлă пулăшушăн тӳлекен укçа виçине ӳстермелли индекссене палăртнă. 239-шĕ валли Раççей Правительстви йышăннă индекссен картинче, 57-шĕ валли халăх суйлакан органсемпе килĕштерсе федераци Правительстви республикăна çитернĕ виçерен уйрăлса тăракан индекссем çирĕплетнĕ.

Ку уйрăмлăх мĕнпе çыхăннă-ха? Ăна кăçалхи августăн 1-мĕшĕнчен çурт-йĕре хутса ăшăтнăран пулакан тăкакшăн тӳлемелли çĕнĕ йĕркене пурнăçа кĕртнипе тата çурт-йĕре хутса ăшăтса кӳрекен пулăшу нормативĕсене ĕçе кĕртнипе ăнлантармалла. Вĕсене ЧР Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи çанталăк уйрăмлăхне, нумай хваттерлĕ çурт миçе хутлине тата ăна хăçан тунине тĕпе хурса хатĕрленĕ. 1999 çулччен хута янă пĕр тата икĕ хутлă, нумай хваттерлĕ çуртсене хутса ăшăтса пулакан коммуналлă тăкак нормативĕсем чылай пысăкланчĕç. Муниципалитетсенче 2014 çул валли чи пысăк индекссем йышăннă чух вĕсем витĕм кӳчĕç.

Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен коммуналлă пулăшу тарифĕсене планпа килĕшӳллĕн улăштарасси федерацин Тарифсен службы РФ субъекчĕсем валли çирĕплетнĕ чикĕллĕ индекссене, çавăн пекех Раççей Правительстви 2014 çулта тата малашлăхри 2015-2016 çулсенче çĕршывăн социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантармалли тĕллевĕнче палăртнă çул-йĕре шута илсе пулса иртрĕ.

● ➡ 2 стр.

**Хаклă вулакансем!**
**Çырăнтару вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене çырăнма васкăр!«Хыпар» – 732 тенкĕ те 66 пус. «Хыпар – шăматкун» – 304 тенкĕ те 08 пус.**

КУН ХЫÇÇĂН КУН

☎ 56-04-26, 28-82-91

### Чи лайăх 7 проект шутĕнче

***Раççей Федерацийĕн Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн пулăшуçи Олег Машковцев ертсе пынипе округри «Бизнес-Ăнăçу» наци предпринимательлĕх премийĕн конкурс комиссийĕ тупăшăва пĕтĕмлетнĕ.***

Унăн ĕçне стратеги пуçарăвĕсен агентствин ертӳçисем, субъектри ĕç тăвакан влаç тытăмĕн представителĕсем хутшăннă.

Конкурса тăратма комисси 66 проект суйласа илнĕ пулнă. Чи нумай сĕннисен йышĕнче – Саратовпа Самар облаçĕсем. Тупăшăва пĕтĕмлетнĕ май экспертсен хаклавĕ хыççăн чи лайăххисен шутĕнче 7 проект юлнă. Ку чыса Чăваш Республики сĕннĕ проект та тивĕçнĕ. Мала тухассишĕн вăл «Ăнăçу патне хывнă çул» номинацире Саратов тата Пенза облаçĕсенчен килнĕ ĕçсемпе ăмăртĕ.

**Ю.ЛИСТОПАД.**

### Турра мухтаса юрлани

***Турра мухтаса кирек ăçта та юрлама пулать, çапах та чиркӳре юрлани татах та витĕмлĕрех, çӳл тӳпене те хăвăртрах çитет.***

Декабрĕн 17-мĕшĕнче кăна-ха, акă, Мускаври Пысăк театр солисчĕн Владимир Маторинăн концерчĕ Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче питĕ ăнăçлă иртрĕ. Тĕнчипе паллă бас тепĕр кунне вара, кăнтăрла иртни пĕр сехетре, тĕп хуламăрти Покровпа Татиана чиркĕвĕнче Кира Иванова регент ертсе пыракан хорпа пĕрле Турра мухтаса юрларĕ.

Чиркӳри концертăн пĕрремĕш пайĕнче Стравинскин, Василий Седов священникăн тата ыттисен Турра тав туса мухтакан юррисемпе Псаломсем пулчĕç пулсан, иккĕмĕш пайĕнче – вырăс халăх юррисем. Халиччен пĕлнĕ, пĕр хут мар илтнĕ юрăсемех Соборта пач çĕнĕлле, итлекене тарăн шухăша ямалла янăрарĕç. Вĕсенче авалхи ĕççынни – хресчен-и вăл е ямшăк-и – хăйĕн кун-çулне нихăçан та Турăсăр ирттерменни яр уççăн палăрса тăчĕ.

Покровпа Татиана чиркĕвне халăх йышлă пухăннăччĕ. Концерт хыççăн паллă юрăç халăхпа чунне уçса калаçрĕ, хăй çылăхлă пулнине ăнланса Турă умĕнче пĕтĕм чун-чĕререн ӳкĕнсе яланах каçару ыйтнине пытармарĕ. Юрласса та çаплах юрлать вăл: пĕтĕм чун хавалĕпе, хĕрӳ чĕрепе. Çавăнпах халăх ăна юрatать, ун концерчĕсенчен тулли кăмăлпа, чунчĕрипе тасалса, çутă ĕмĕт-тĕллевпе пуянланса тухать.

**Р.ГУРЬЯНОВА.**

### «Иртнĕ вăхăт таппинче»

***Çак ятпа Чăваш наци музейĕнче сехетсен куравĕ уçăлнă. Унта – республика музейĕнче тата Чикме хулинчи историпе культура комплексĕнче упранакан экспонатсем.***

Чăваш наци музейĕн тĕп управçи Татьяна Гринева каланă тăрăх – куравра паллă тĕрлĕ пулăма халалласа ăсталанă сехет нумай. Тĕслĕхрен, хăй вăхăтĕнче «Аслă Çĕнтерӳ – 45 çул», «Куç микрохирургийĕ – 20 çул», «Шупашкар керамики – 40 çул» ятлă сехетсем кун çути курнă. 2011 çулта Шупашкарта иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль тĕлне те ятарлă сехет тухнă иккен. Вĕсемпе тата ытти чылай юбилей япалипе паллашма пулать музейре. Куравра уйрăм вырăн Сергей Трифонов коллекционерăн сехечĕсем йышăнаççĕ, пурĕ – 66 экспонат. Мускаври иккĕмĕш заводра 1940 çулта туса кăларнисем те, кĕсьене чиксе çӳремеллисем те тата ытти те пур кунта.

Куравра Чăваш Ен хăнисен парнисем те сахал мар.

**А.ПЕТРОВ.**

### Вилĕме юрăпа çĕнтернĕ паттăр



***Культура çулталăкне халалласа Патăрьел районĕнчи Кивĕ Ахпӳрт ялĕнче шкул, вулавăш, культура вучахĕн ĕçченĕсем ертсе пынипе чылай мероприяти ирттернĕ. Çак кунсенче вара ялти шкулта ятарлă çулталăка пĕтĕмлетсе чăвашсен паллă сăвăçи, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин паттăр салтакĕ Валентин Урташ çуралнăранпа 90 çул çитнние паллă туса «Вилĕме юрăпа çĕнтернĕ паттăр» уяв каçĕ пулнă.***

Малтанах çамрăксем вулавăш ĕçченĕ Антонина Капитонова хатĕрленĕ «Чăваш шăпчăкĕ» кĕнеке куравĕпе паллашнă. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Марина Табакова йĕркеленĕ «Валентин Урташăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ» презентаци те пухăннисен кăмăлне килнĕ. Марина Ильинична паллă çыравçăн вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен каласа панă, сăвви-калавĕпе паллаштарнă. Юлашкинчен пурте пĕрле чăваш композиторĕсем поэтăн сăввисемпе кĕвĕленĕ юрăсене юрласа киленнĕ.

**С.ИВАНОВА.**

Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать, кăштах юр çăвать. Çил анăçран 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 2, çĕрле 6 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 730 мм, сывлăшри нӳрĕк 95 процент.

**Кун тăршшĕ 6 сехет те 56 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 10, çĕрле 13 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 738 мм, сывлăшри нӳрĕк 80 процент.

**Кун тăршшĕ 6 сехет те 56 минут.**

# Коммуналлă пулăшушăн татăлмалли йĕрке улшăнчĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

| Коммуналлă пулăшу | РФ Тариф служби çирĕплетнĕ вăтам виçе | Чăваш Енри вăтам виçе |
|---|---|---|
| Çурт-йĕре хутса ăшăтасси | 105,2 | 103,4 |
| Сивĕ шыв тата çурт-йĕртен таса мар шыва юхтарса кăларасси | 104,7 | 103,1 |
| Газ | 104,2 | 104,1 |
| Электроэнерги | 104,2 | 104 |

Республикăри нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем ноябрь пуçламăшĕнче пурăнмалли вырăна хутса ăшăтнăшăн тӳлемелли квитанцисенче палăртнă тӳлев укçине çĕнĕлле шутланине асăрхарĕç ĕнтĕ. Коммуналлă пулăшу кӳмелли йĕркепе ăна РФ Правительствин 2011 çулхи майăн 6-мĕшĕнчи 354-мĕш йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ, çак пулăшушăн пурăнмалли çуртăн пĕрлехи счетчик кăтартăвне пăхса çурт-йĕре хутса ăшăтнă тапхăрта кăна тӳлеттереççĕ. Çуртăн счетчик пулмасан çурт-йĕре хутса ăшăтас енĕпе кӳрекен коммуналлă пулăшу нормативне тĕпе хураççĕ.

Кăçалтан пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу тӳлевĕн виçи çулла тата хĕлле пĕр мар. Потребительсем пурăнмалли вырăна хутса ăшăтмалли уйăхсенче – ытларах, çулла чылай сахалрах тӳлеççĕ. Тӳлевĕн çĕнĕ йĕрки çинчен ЧР Строительство министерствинчен /тел.: 64-22-27/ ыйтса пĕлмелле.

Пулăшу ĕçĕшĕн тӳлев квитанцине хăвăр шухăшласа палăртнинчен пысăкрах хак çырнă тесе шухăшлатăр тăк чи малтанах çурта пăхса тăракан коммуналлă хуçалăхран ăнлантарма ыйтăр. Унăн хуравĕ тивĕçтермесен ЧР Патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцине кайăр е çыру çырăр. ЧР Конкуренци политикин тата тарифсен служби ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе коммуналлă хуçалăхсем тарифсемпе еплерех усă курнине тĕрĕслесе тăрать.

Раççей Правительствин кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчи 2222-р-мĕш хушăвĕпе республикăн граждансем коммуналлă пулăшушăн тӳлекен укçа виçине 2015 çулта улăштармалли индекссене тата хăшпĕр муниципалитетра 2015-2018 çулсенче усă курмалли виçене çирĕплетнĕ:

| Раççей Федерацийĕн субъекчĕ | Раççей Федерацийĕн вăтам индексĕ | | | Хăшпĕр муниципалитет йĕркеленĕвĕнче индексран иртсе çирĕплетнĕ виçе | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | Çул | Тапхăр | Пĕлтерĕшĕ | Çул | Тапхăр | Пĕлтерĕшĕ |
| Чăваш Республики | 2015 | январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшĕччен | 0 | 2015 | январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшĕччен | 0 |
| | | | | | Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшĕччен | 2,3 |
| | | Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшĕччен | 8,9 | 2016-2018 | январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшĕччен | 0 |
| | | | | | Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшĕччен | 2,3 |

Çапла вара Чăваш Енре 2015 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа коммуналлă пулăшу тӳлевĕн виçи вăтамран 11,2% хушăнĕ.

**Альбина ЕГОРОВА, ЧР конкуренци политикин тата тарифсен служби ертӳçи.**

САМАНА ТАППИ

# Халăх сывлăхĕшĕн вăя шеллемесĕр

***Нина Бурдасова Елчĕк тăрăхĕнчи Патреккелте çитĕннĕ. Пĕчĕклех тăрăшулăхпа палăрнă, ырă ĕмĕт-шухăшпа хавхаланнă, тасалăха юратнă.***



Ăна тăванĕсен хушшинче медицина ĕçченĕсем пурри савăнтарнă, яланах тин çеç çунă юр пек шурă тумпа çӳрени тыткăнланă. Унăн та вĕсем пекех шурă халат тăхăнас килнĕ. Шкул хыççăн Шупашкарти медучилищĕре пĕлӳ илсен икĕ çул тĕп хулари сыватмăшра тăрăшнă, профессие тĕрĕсех суйларăмши тесе хăйне ĕçре тĕрĕсленĕ. Иккĕленӳ сирĕлсен аслă пĕлӳ илнĕ. Ăна направленипе Тăвай районĕнчи тĕп сыватмăша ĕçлеме янă. Нина Николаевна 30 çул хушшинче ахаль тухтăртан тĕп врача çитнĕ. Халăх сывлăхĕшĕн вăй-халне шеллемесĕр тăрăшать те ыттисенчен те çирĕп ыйтать.

Поликлиникăна кунсерен 200 çынран кая мар пырать. Чирлисене выртса тăма 72 вырăн /22-шĕ – кăнтăрла килекенсем валли/ хатĕрленĕ. Енĕш Нăрваш, Тăвай, Тăрмăш, Тĕмер, Турикас Тушкил, Чутей, Элпуç ялĕсенче пĕтĕмĕшле тухтăр практикин уйрăмĕсем ĕçлеççĕ. Чирлисене йышăнма кашнин икшер вырăн пур. 15 ФАПран пиллĕкĕшне ЧР Пуçлăхĕн программипе килĕшӳллĕн тĕпрен çĕнетме палăртнă. Пĕлтĕр – Вырăс Салинче, кăçал Çĕнĕ Ишпуçпа Вăтаелĕнче хута янă. 2015 çулта Амалăхпа Тенеялĕнче çĕнĕ ФАПсем çĕкленĕç.

Районти сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнче 256 çын вăй хурать. 39 тухтăртан 7-шĕ – аслă, 14-шĕ – пĕрремĕш, 3-шĕ – квалификацин иккĕмĕш категорийĕллĕ. Пиллĕкĕшĕ – "ЧР тава тивĕçлĕ врачĕ", виççĕшĕ "РФ сывлăха сыхлас ĕç отличникĕ" хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Ятарлă вăтам пĕлӳллĕ 126 специалистран 90-шĕ – квалификацин тĕрлĕ категорийĕллĕ /71,4%/, 4-шĕ – хисеплĕ ятсумлă. Больницăра чăнласах пысăк пĕлӳллĕ ĕçченсем вăй хураççĕ. Кăçалхи тăхăр уйăхра 13 тухтăр ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин врачсен пĕлĕвне тарăнлатакан институтĕнче, вăтам сыпăкри 30 медик Шупашкарти медколледжра ятарлă курссенче ăс-тăна çивĕчлетнĕ.

ЧР Правительстви бюджетран уйăрнă 30 млн яхăн тенкĕпе сыватмăша 2012 çулта тĕпрен юсанă хыççăн медицина ĕçченĕсен ĕçлес кăмăлĕ палăрмаллах ӳснĕ. "Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева тав сăмахĕ каласшăн. Пирĕн пата килекенсем халĕ больницăна хуларинчен нимĕн чухлĕ те кая маррине çирĕплетеççĕ, – тет кăмăллăн Нина Бурдасова. – Ăшăпа çутă çителĕклĕ, тасалăх тыткăнлать. Халăх сывлăхĕшĕн малашне те вăя шеллемĕпĕр".

"Земство тухтăрĕ" программăпа килĕшӳллĕн кунта юлашки çулсенче 7 специалист ĕçе вырнаçнă. Пурте аслă пĕлӳллĕ. Пĕрер врачпа медсестра тупăнсан кадр ыйтăвĕ вăхăтлăха татăлать. Мĕншĕн тесен коллективра пенсие тухнисемпе вĕсен ӳсĕмне çывхаракансем пур. Вĕсене улăштаракансем вара кирлех.

Демографи лару-тăрăвĕпе паллашрăм. Пĕлтĕрхи тата кăçалхи 11 уйăхри кăтартусене танлаштарсан – вилекенсем пĕр шайрах темелле, çуралакансем вара 141-рен 155-е çитнĕ. Ытларах арçынсем çут тĕнчерен уйрăлаççĕ, ĕçлеме пултаракан ӳсĕмрисем: 64-ран 54-шĕ – арçын, 10-шĕ – хĕрарăм.

"Сывлăх – тĕп пуянлăх", – тетпĕр. Районта пурăнакансем ăна епле упрасси тата çирĕплетесси тĕп больницăра ĕçлекенсенчен те нумай килет. Çакна Нина Николаевна ертсе пыракан туслă коллектив самантлăха та манмасть.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Госслужба занятости Чувашии

# Ялхуçалăх специалисчĕсем кирлĕ, строительсем...

***Халăха ĕçпе тивĕçтермелли патшалăх политикине Красноармейскисем кăçалхи 11уйăхра ĕçлевпе çыхăннă мероприятисемпе тата Чăваш Республикинчи ĕç рынокĕнчи кăткăслăха сирес енĕпе палăртнă хушма мерăсемпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ. Асăннă тапхăрта юрăхлă вырăн шыраса центра 977 çын пынă, кунти специалистсем пулăшнипе 890-шне /91 процент/ вырнаçтарма май килнĕ. Коллектив ĕçĕ-хĕлĕпе паянхи кăларăмра унăн директорĕ Иван КОЗЛОВ паллаштарать.***

**– Иван Михайлович, ĕçпе тивĕçтерес енĕпе патшалăх пулăшăвне илекен йышлă-и?**

– Паллах. Акă профориентаци мероприятийĕсенех илер. Вĕсене 472 çын хутшăннă, çав шутра: хĕрарăмсем – 52,2, 14-29 çулсенчи çамрăксем – 76,5, инвалидсем – 1,5, организацие хупнипе тухса кайнисем – 6, чылайранпа ĕçлемесĕр пурăннă хыççăн вăй хурас тĕллевлисем – 12, тивĕçлĕ кану ӳсĕмне çывхаракансем 2,3 процент. Профориентаци тĕллевĕ – çын мĕне пултарнине, специальноç пурри-çуккине, ăнтăлăвне тата районти ĕç рынокĕнчи лару-тăрăва кура юрăхлă ĕç суйлама пулăшасси.

Вырăнти ĕç рынокĕ ыйтакан рабочи профессийĕсен сумне ӳстерес тĕллевпе пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкулсенчи 40 вĕренекен валли "ТУС" АХОн филиалĕнче – "КЕТРА" заводра экскурси ирттертĕмĕр. Çамрăксем керамика изделийĕсене ятарлă кăмакасенче хăвăрт хĕртмелли çĕнĕ технологисемпе тата хăйнеевĕрлĕ, пысăк пахалăхлă сушилкăсемпе паллашрĕç. Вĕсем ĕç рынокĕ ыйтакан хальхи профессисем пирки ытларах пĕлчĕç паллах. Çакă пулас специальноçе суйланă чухне витĕм кӳрессе шанатпăр.

Ĕççĕр 12 çын "Д","С" категорисен водителĕн, электрогазосварщик, уйрăм хуралçă, ПЭВМ операторĕн, интерьер дизайнерĕн специальноçĕсене илчĕ, экономист квалификацине /ПЭВМпа сметăсене шутласси/ ӳстерчĕ. Вĕренĕве ĕçпе тивĕçтерекенсен ыйтăвне тата çынсен кăмăлне тĕпе хурса йĕркеленĕ. Çакăнта рабочи профессийĕсен тӳпи 66,6 процентпа танлашать. Пĕлӳ илсен 10-шĕ хăйсем вĕренсе тухнă специальноçпех вырнаçрĕ.

**– Йывăрлăха лекнĕ çынна сăмахпа лăплантарма та пĕлмелле...**

– Мероприятисене çакна тĕпе хурса йĕркелетпĕр те. Акă, социаллă адаптацин мероприятийĕсем "Ĕçе вырнаçмалли технологи" программăпа килĕшӳллĕн иртеççĕ. Вĕсене хутшăннă 26 çын çапла майпа ĕçлес туртăма ӳстерчĕ, хăй тĕллĕн ĕç шырас енĕпе хăнăху илчĕ, вырнаçас шанăçа тĕреклетрĕ. Занятисенче ĕççĕрсем хăйсем мĕне юрăхлине тишкерме, çавăн пекех рынокри лару-тăру, ваканси, ятарлă программăсем пирки тулли информаци илме пултарчĕç.

Психологи пулăшăвне 30-ăн тивĕçрĕç. Вĕсем валли тренингсем ирттерме "Аспект" центрăн, Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин специалисчĕсене чĕнсе илнĕ. Пысăк квалификациллĕ психологсемпе çыхăну тытни ĕççĕр граждансене пурнăçра пуçарулăх кăтартма, тивĕçлĕ вырăн тупма, хăйĕншĕн тата малашлăхĕшĕн яваплă пулма вĕрентет.

**– Общество ĕçĕ йĕркелени йывăрлăха лекнĕ çыншăн çăлăнăç вĕт. Ку енĕпе лару-тăру мĕнлерех?**

– Обществăн тӳлевлĕ ĕçне кăçалхи 11 уйăхра 123 çынна янă, вăхăтлăх йĕркеленине ĕççĕр 11 çын кайнă. Вĕсем территорисене тасатнă, тирпей-илем кĕртнĕ, юсав ĕçĕсене пурнăçланă, тырпул пухма хутшăннă.

"14-18 çулсенчи çамрăксем валли вĕренӳрен пушă тапхăрта вăхăтлăх ĕç йĕркелесси" программăпа килĕшӳллĕн ĕç паракансемпе 19 килĕшӳ çирĕплетсе 407 ачана вырнаçтарнă, вĕсене хăйсене тыткаламалăх укçаллă пулма пулăшнă. Çул çитмен çамрăксем шкулсене тирпей-илем кĕртнĕ, пӳлĕмсене, сĕтел-пукан юсанă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене тата вĕсен çемйисене пулăшнă. Çар çыннисен вилтăприсене, палăксене йĕркене кĕртнĕ. Çуллахи каникулта 44 çамрăка ялхуçалăх предприятийĕсене тырпул пухса кĕртмешкĕн вăхăтлăх вырнаçтарнă.



● *Центр специалисчĕсем ыйтусене пĕрлехи вăйпа татса параççĕ.*

Ĕçлев центрĕпе çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен комисси теветкеллĕх ушкăнне кĕрекен тата йывăр шăпаллă ачасене çу кунĕсенче ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе вăйсене пĕрлештернĕ. Центра пынисене консультаципе, профориентаци пулăшăвĕпе тивĕçтернĕ, рынокри лару-тăрупа паллаштарнă. Комиссире учетра тăракан 4 тата йышлă çемьери 69 çамрăка ĕçе йышăннă.

Профессин пуçламăш тата вăтам пĕлĕвĕн учрежденийĕсенчен вĕренсе тухнă, пуçласа ĕç шыракан 18-20 çулсенчи яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа та çапла майпах хӳтĕлетпĕр. Кăçал 3 çынна вăхăтлăх вырнаçтартăмăр.

Унсăр пуçне служба органĕ янипе 22 çынна Раççейĕн ытти регионĕнче йышăннă.

**– Ĕç рынокĕнчи кăткăслăха сирес тĕллевпе палăртнă хушма мерăсем ăнăçлă пулнине палăртрăр. Вĕсен витĕмне мĕнре куратăр?**

– Кăçал вĕсемпе килĕшӳллĕн палăртнă мероприятисене 13 çын хутшăнма пултарчĕ. Тĕслĕхрен, ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ тата ĕçе таврăнас шухăшлă 8 хĕрарăм професси илчĕ, тепĕр специальноçе хăнăхрĕ, квалификацие пуянлатрĕ. Çиччĕшĕ хăйсене юрăхлă ĕç тупрĕ те ĕнтĕ.

3 инвалида тата нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕнчен 2-не вырнаçтарнă, вĕсем валли ятарлă оборудовани вырнаçтарса тăкакланнăшăн 5 предприятие компенсаци тӳленĕ.

Центрта учетра тăракан 3 çын харпăр хăй ĕçне йĕркелерĕ: пĕри парикмахерски уçрĕ, тепри сурăх ĕрчетме тытăнчĕ, виççĕмĕшĕ туй кĕпи çĕлеме пикенчĕ.

**– Районта пурăнакансене ĕçпе тивĕçтерессине эсир, асăннă служба центрĕн ертӳçи, мĕнлерех хаклатăр?**

– 2014 çулхи декабрь уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне регистрациленĕ ĕççĕрсен йышĕ 44 çын пулнă. Шута илнĕ ĕççĕрлĕх шайĕ вăйпитти ӳсĕмри граждансен хисепĕпе шайлаштарсан 0,52 процентпа танлашнă. Ĕç рынокĕнчи кăткăслăх коэффициенчĕ /пĕр ваканси пуçне центрта учетра тăракансен йышĕ/ кăçалхи декабрь уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 0,32 единица пулнă, урăхла каласан 1 çын пуçне 4 вакансие яхăн тивнĕ.

Ĕç рынокĕнче паян çĕнĕлле ыйтаççĕ. Пĕр енчен, професси хăнăхăвĕ пысăк тата опытлă специалистсем тĕлĕшпе ваканси шучĕ ӳссе пырать. Тепĕр енчен, экономика ĕçĕ-хĕлĕн уйрăм тĕсĕнче ваканси хисепĕ пĕр килмест: е пысăкланать, е пĕчĕкленет. Хальхи вăхăтра ялхуçалăхĕнче вăй хуракансем, строительсем, курттăм тата вак суту-илӳре тăрăшакансем кирлĕ.

Умри тĕллевсене пурнăçласси иккĕлентермест: коллектив туслă та пултаруллă, партнерсем шанчăклă, Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳлĕхĕ кулленхи пурнăçра пулăшса-вĕрентсе пырать. Вĕсене çывхарса килекен Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсем ячĕпе чунран саламлатăп, ĕçлĕ çыхăнусем çирĕпленсе пырасса шанатăп.

**– Иван Михайлович, хăвăра та Раççей Ĕç министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ ятпа ăшшăн саламласа çĕнĕ çитĕнӳсем тумашкăн ырлăх-сывлăх сунатпăр.**

– Тавах.

■ **Валентина СМИРНОВА калаçнă**

ПАЯНХИ ПУРНĂÇ

# Пĕри – сухапуçпа, çиччĕн – кашăкпа

***Ялта мĕн акса туса илмеллине халĕ кам кăна вĕрентмест: хире тухса курманни те, ĕне çиллине тытса пăхманни те. Ăс параканни, хушса лараканни хунаса кайрĕ, çĕр çинче ĕçлес текенсем вара сахаллансах пыраççĕ. Хăй тĕллĕн бизнес пуçарнисене çăмăл-и паян? Шăпах çакăн пирки калаçу пуçарчĕç республикăри паллă фермерсем. Тăнлар-ха вĕсен сăмахне.***



**Николай АДЕР, Çĕмĕрле районĕнчи предприниматель, ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутачĕ:** 2009 çул. Апрель уйăхĕ. «Дружба» ялхуçалăх кооперативĕ шанăçа тӳрре кăларманнипе Тури Кăмаша çыннисем ял пухăвĕнче çĕнĕ хуçалăх йĕркелеме йышăнчĕç. Ĕлĕкхилле колхозах пултăр терĕмĕр. Чылайăшĕ хăйĕн харпăрлăх пайĕпе пĕрле усă курнă лаптăкран уйрăлса тухса «1-ое мая» ялхуçалăх тытăмне кĕме кăмăл турĕ. Анчах унччен хуçалăха ертсе пынисем пурлăхăн пысăк пайне аларан вĕçертмерĕç. Халăха çурăк валашка умĕнче тăратса хăварчĕç. Çапла вара витесем тăвассипе, техника туянассипе хамăрăн тăрăшма тиврĕ. Тĕрĕссипе, эпĕ хулара уçнă предприяти укçине – темиçе миллион тенкĕ – тăкакларăмăр. Яла чĕрĕлӳ сăнсăпачĕ çапнăччĕ: çул юсама, культурăпа кану вырăнне йĕркене кĕртме тытăнтăмăр.

2010 çулхи типĕ çу нумай сăтăр кӳчĕ. Тулă пусси типрĕ. Çĕр сахаллипе, ăна çулталăклăха çеç усă курма панипе кирлĕ пек аталанаймастăн. Фермăра выльăхпа ĕçлеме кăмăллакансене тупма хĕн. Пирвайхи хĕлхем сӳнме пуçларĕ. Таврара пушă выртакан, çын алли перĕнмен çĕр миçе çĕр гектар-ши? Мĕн пытармалли, выльăх шутне сыхласа хăварассишĕн ют çарансенче вăрттăн утă çулса илни те пулкаланă.

Çирĕм çул каялла çĕршыва фермер тăрантарĕ тесе калани пуш сăмаха çаврăнасран пăшăрханма пуçларăмăр. Ялта ĕçлеме вăйпитти çын сахал юлнишĕн кулянатпăр. Ялхуçалăхĕ йывăрлăха кĕрсе ӳкни районти тӳре-шара аппарачĕн ĕçĕнче сисĕнмелле пек. Ăçта унта! Совет саманинче туса лартнă кантурсенче саркаланса лараççĕ, вĕсен йышĕ пачах чакман, шалу вăхăтра илеççĕ. Шăрăха пула хресчен нумай тăкак тӳсни вĕсене ним енчен те пырса тивмест-ши вара? Ĕнерхи агрономсемпе зоотехниксем халь эксперт та референт пулса тăнă. Ăслă-тăнлă, вăйпитти çак тӳресене пĕрер миллион тенкĕ грант парса яла ярасчĕ. Кăтартчăр «юлхавсене» ăсталăх класĕ!

**Владимир БЕЛОВ /Етĕрне районĕ, Яракасси/:** 2013 çулта республикăра туса илнĕ сĕтĕн – 69,5, аш-какайăн 38,8 процентне килти хушма хуçалăх панă. Чăваш сывă мар чухне те больница хучĕ илме чупмасть, витерех кăштăртатать. Пирĕнпе чикĕллĕ Чулхула облаçĕнчи сыхланса юлнă фермăсенчи выльăха чăвашсем пăхаççĕ. Йывăр тесе нихăшĕ те пăрахса каймасть. Тӳсĕмлĕх пурах çав чăвашăн.



**АДЕР:** Пĕчĕк фермăра тăрмашакан çын паян хăех кĕтӳçĕ, механизатор, выльăх пусакан, ветеринар та. Канмалли кун çук, отпуск пирки ан та ĕмĕтлен. Сывлăхне çавăнта пĕтерет. Кĕтмен самантсем сиксе тухаççĕ. Сасартăк чирлесе ӳксен кам тăрантарĕ выльăха? Сăмах май, Испанире чирленĕ е отпускри фермера улăштарма ятарлă звено йĕркелеççĕ. Сĕнӳ пур – канмасăр ĕçленĕшĕн фермерсене дотаципе тивĕçтермелле.

**БЕЛОВ:** Килте выльăх нумай тытакансене çăмăллăхсем памалла тесе шутлатăп. Выльăх пăхни ĕç стажне кĕтĕр, паллах, сĕт тата какай мĕн чухлĕ панине шута илччĕр. Ытти çĕршывсенче мĕн пулса иртнине сăнасах тăратпăр. Сăмахран, какайран илнĕ тупăшăн 60 проценчĕ – выльăх ӳстерекенре, ытти 40 проценчĕ продукци тирпейлекен тата сутакан тытăмсене юлсан çеç ӳсĕмлĕ ĕçлеме майсем уçăлаççĕ.

**Василий СЕМЕНОВ фермер /Куславкка районĕ/:** Пахча çимĕçпе ĕçлеме пуçланă çулсенче нумай япалана эпĕ хам тĕллĕн вĕренсе пынă. Çукран пур тума çав тери йывăр. Пĕлӳ çитменнине туятăн. Ялта ăста кадрсем питĕ кирлĕ. Мана пур енĕпе те тивĕçтерекен специалист тупăнсан ăна пысăк шалу тӳлеме хатĕр. 30 е 40 пин мар, 80-100 пин тенкĕ тӳлĕттĕм. Тупса парасчĕ е сĕнесчĕ мана çавнашкал специалист.



**АДЕР:** Ялхуçалăх академийĕнче вĕренекенсенчен миçе проценчĕ яла таврăнать-ши? Питĕ кăсăклă ыйту. Шкулсенче «Производство вĕрентĕвĕ» предмета пĕтерни тĕрĕс мар пулчĕ. Хĕр-упраçа машинăпа ĕне сума хăнăхтаратчĕç, яшсем тракториста вĕренетчĕç. Совет тапхăрĕнчи ырă пахалăхсене чĕртсе тăратни пĕрре те япăх пулас çук.

**СЕМЕНОВ:** Тĕнчене тухсан куç уçăлать. Иртнĕ çулсенче нумай çĕршывра пултăм. Вĕсен производство культури пирĕннинчен чылай урăхла. Европăран самаях кая юлнă эпир, çапах тапаланатпăр-ха. Ютран килнĕ делегацисем вара шалт тĕлĕнеççĕ. «Вăй-хал ăçтан тухать сирĕн?» – тесе ыйтаççĕ. Ара, нумай ĕçе алă вĕççĕн тăватпăр-ха та. Пĕлӳ çителĕксĕрри ура хурать тата пире. Япони тăрăх çӳресе тĕлĕнтĕм. Çĕрĕ те хĕсĕк вĕсен, нефтьпе газ та уçламаççĕ, ăсĕ вара хăйсенчен малта пырать.

**АДЕР:** Пирĕн тытăм, ĕç йĕрки урăхларах: пĕри – сухапуçпа, çиччĕн – кашăкпа. Кантурсенчи йыша 60-70 процент таран чакарасси пирки шухăшласа пăхмалла «çӳлтисен». Вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен витĕмне те палăрмаллах вăйлатмалла.

**БЕЛОВ:** Патшалăх ялхуçалăх предприятийĕсене дотаци парса пулăшать, çав хушăрах килти хушма хуçалăха кĕмĕл сахал тивет. Техника туянма укçа-тенкĕ çитсе пымасть. Хĕрлĕ Чутайри пĕр фермер, банкран пысăк кредит илнĕскер, çемйипех «çунса» кайни çинчен илтрĕмĕр. Халь кам татăлĕ банкпа? Вĕсен шаннă çыннисем-и? Эпĕ килте выльăх çитĕнтерекене пулăшмалли патшалăх программи çукки çинчен каларăм. Тырпул ӳстерекене хӳтĕлекен механизм кирлĕ. Калăпăр, унччен Хресченсен партийĕн сасси Раççейре вăйлă янранă, ăçта халь çав депутатсем?

**СЕМЕНОВ:** Ывăл Голландие стажировкăна кайса килчĕ. Пĕррехинче çапла ларĕ: «Кредитсене парса тататпăр та хамăр ĕçлесе илнипе пурăнма пуçлăпăр». Парăмран тухни лайăх-ха, çапах производствăна аталантарма банк кредичĕ яланах кирлĕ. Çакна каярах ывăл та ăнланса илчĕ. Пирĕн ялхуçалăхĕнчи тĕп çитменлĕх вăл – хирте туса илнĕ продукцие лайăх упрама пĕлменни. Ку чухнехи управсем тăвассипе никамах та ĕçлемест. Апат-çимĕçе хитре чĕркесе сутассине кирлĕ пек хакламастпăр. Пысăк супермаркетсемпе суту-илĕвĕн федераци сечĕсем чăваш пахча çимĕçне хапăл туманнин сăлтавне çакăнта шырамалла. Эпир хамăр патра çитĕнтернĕ купăстана е хăяра тирпейлекен, савăтсене тултаракан производствăна хута ятăмăр. Хамăр çине тăнипех çывăхри Тутарстан пасарĕсене тухса сутма хăюлăх çитертĕмĕр. Такам килсе туса парасса кĕтсе лармалла мар, хамăрăн ăс-тăнпа пурăнма хăнăхмалла.

**АДЕР:** Килĕшмелле. Чăвашсем юлхавланнипе-ши е çĕр ĕçне чухламаннипе пирĕн тăрăхра ютран килнисем тымар яма пуçларĕç. Акă Çĕмĕрле районне шведсен «Кэннет» фирми куç хывнă. Якуртушкăньре 300 гектар ытла çĕр туянчĕç. «Тинех инвесторсем киле пуçларĕç», – тесе район ертӳçисем хĕрлĕ кавир сарса кĕтсе илменни çеç. Чĕр мăшкăл! Швечĕсем йĕркеллĕ ĕçлесе кăтартман, хыснана налук тӳлеме пуçламан – эпир вара пулса çитмен çак «спектакльпе сцена çине тухасшăн». Ăçта çухалчĕ чăваш ĕçченлĕхĕ? Çĕртен мĕншĕн писсе пыратпăр?

**БЕЛОВ:** Тата тепĕр шухăш пуça килчĕ. Пилĕк çул ялхуçалăх специальноçне вĕреннисене /вĕсене ăс парассишĕн хысна укçине нумай тăкакланă/ ялта ĕçлесе татмалли йĕркене тавăрма вăхăт çитрех-тĕр. Тухтăрсене ялта çирĕплетсе хăварма миллион тенкĕ параççĕ, ялхуçалăхне каякан специалистсем пирки те шухăшласа пăхмалла.

**АДЕР:** Йĕркеллĕ ĕçлесен йывăрлăхсене сирме майсем пур. Наука сĕннĕ пек ĕçлемелле тенипе килĕшетĕп. Патшалăх пулăшсан 100 пуç тытмалли чи çĕнĕ технологиллĕ ĕне витине те хута ярăпăр, выльăхсемшĕн те, ĕçлекенсемшĕн те хăтлă пулĕ вăл.

■ **Вячеслав ГРИГОРЬЕВ çырса илнĕ**

**РЕДАКЦИРЕН.** ***Фермерсен шухăшĕ-сĕнĕвĕ пирки ялхуçалăхĕнче ĕçлекен ытти фермер, предприяти ертӳçи мĕн шухăшлать-ши? Çырусем кĕтетпĕр е электронлă почтăпа шухăшăрсене пĕлтерĕр.***

Чăваш Енре
Культура çулталăкĕ

# Ял библиотеки халăха питĕ кирлĕ

***"Елчĕк районĕ – чăвашлăх утравĕ", – çакăн пек каланине пĕрре мар илтнĕ. Чăваш Енри паллă çынсенчен те. Çак шухăшпа çĕр проценчĕпех килĕшетĕп, мĕншĕн тесен ку тăрăхра чăн чăвашла калаçаççĕ, мероприятисене – çав шутрах райадминистраци пуçлăхĕ тунтикунсерен йĕркелекен планеркăсене, район депутачĕсен Пухăвĕн ларăвĕсене те – тăван чĕлхепех ирттереççĕ.***



Елчĕксем тăван чĕлхене юратни тата хисеплени районти ял тăрăхĕсен хушшинчи тĕп библиотекăра та лайăх сисĕнет. Акă, директорăн ĕç пӳлĕмĕн алăкĕ çине чăн чăвашла "Вулавăш ертӳçи" тесе çырнă. Стендсем пурте тенĕ пекех чăвашла. Тăван чĕлхепе тухса тăракан хаçат-журнал та куç умĕнче. "Эпир "Хыпар" хаçатпа "Çамрăксен хаçачĕн" электрон версийĕсене те çырăнса илетпĕр: вĕсем йӳнĕрех, çитменнине çĕнĕ номерсем хăвăртрах çитеççĕ", – лару-тăрупа паллаштарчĕ тĕп библиотека директорĕ Людмила Зайцева.

Кăçал Культура çулталăкĕ пулнă май районти тĕп тата ялсенчи библиотекăсен – пĕтĕмпе 24 вĕсем – ĕçченĕсем тем тĕрлĕ мероприяти /вĕсенчен чылайăшĕ халăха кĕнекене юратма хăнăхтарассипе тата вулава йăлана кĕртессипе çыхăннă/ йĕркеленĕ, чăваш çыравçисемпе, пултарулăх çыннисемпе тĕлпулусем тăтăшах ирттернĕ. Вулавăш влаç органĕсемпе, тĕрлĕ предприяти-организаципе, массăллă информаци хатĕрĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлет, культура тата социаллă пуçарусен центрĕ пулса тăрать. "Эпир районта пурăнакансене информаци ресурсĕсемпе усă курса тата общество çыхăнăвĕсен тытăмĕ урлă тавракурăмне анлăлатма пулăшатпăр. Мĕн пытармалли: çĕнĕ технологисем пурнăçа кĕрсе пынă май кĕнеке патне туртăнакансен йышĕ майĕпен чакать, çапах ял библиотеки халăха паянхи кун та питĕ кирлĕ", – калаçăва тăсрĕ Людмила Александровна. Ахальтен мар ĕнтĕ библиотекăра йĕркелекен тĕлпулусене, ытти мероприятие çын йышлă пухăнать.

Тĕп вулавăшра "Çутçанталăк тата çын", "Шурă туя" /куçĕ япăх куракансем валли/ клубсем ĕçлеççĕ. Вĕсене çӳрекен çынсемпе РФ Пенси фончĕн Елчĕк районĕнчи управленийĕн пуçлăхĕ, райадминистраци пайĕсен ертӳçисем, тухтăрсем тата ытти специалистсем тăтăшах тĕл пулаççĕ: саккун çĕнĕлĕхĕсемпе паллаштараççĕ, кăсăклă пĕр-пĕр темăпа лекци вулаççĕ, сывлăха упрама вĕрентеççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ. Тĕрлĕ шайри пуçлăхпа куçакуçăн калаçма май туса панăшăн библиотекарьсене çынсем чĕререн тав тăваççĕ.

Культура çулталăкĕнче ял тăрăхĕсен хушшинчи тĕп библиотека директорĕ Людмила Зайцева РФ Культура министерстви йĕркеленипе Мускав тата Владимир хулисенче иртнĕ "Ял библиотекине юсаса çĕнетни – вырăнти лару-тăрăва улăштармалли хатĕр евĕр" проект-аналитика семинарне хутшăннă. Пирĕн республикăран унта вăл пĕччен çеç кайнă. "Республикăн тĕрлĕ кĕтесне тата унăн тулашне тухса çӳрени, ыттисен опычĕпе паллашни ĕçре пысăк пулăшу кӳрет. Раççей шайĕнчи семинарта тĕрлĕ регионтан килнĕ ĕçтешсемпе ялсенчи вулавăшсен йывăрлăхĕсене сӳтсе яврăмăр", – терĕ директор. Кăçал октябрь уйăхĕнче районсенчи вулавăшсен ертӳçисем валли йĕркеленĕ курссенче пулнине те, Пенза облаçĕнчи М.Лермонтовăн "Тарханы" музей-заповедникне кайса килнине те хавхаланса аса илет библиотекăра 1978 çултанпа тăрăшакан Людмила Александровна.

**Елчĕкри вулавăшра ĕçлекенсен опычĕпе те ыттисем кăсăкланаççĕ. Акă, ноябрь уйăхĕнче Краснодар крайĕнчи муниципалитет библиотекисен ертӳçисем Елчĕкри тĕп тата Аслă Елчĕкри вулавăшсенче пулса курнă.** Инçетрен килнĕ хăнасем Аслă Елчĕкре халăха ял библиотеки урлă патшалăх тата муниципалитет пулăшăвĕсене мĕнлерех панипе паллашнă. РФ Президенчĕн 2012 çулхи май уйăхĕн 7-мĕшĕнчи "Патшалăх управленийĕн тытăмне лайăхлатмалли тĕп çул-йĕр çинчен" 601-мĕш указне пурнăçласа халăха патшалăх пулăшăвĕ парас тĕллевпе районти библиотекăсен никĕсĕ çинче нумай функциллĕ центрсен 8 "чӳречине" уçнă. Вĕсем "пĕр чӳрече" мелĕпе аванах ĕçлесе пынине палăртмалла, ахальтен мар ĕнтĕ Елчĕксем ку енĕпе республикăра 5-мĕш вырăнта.

Районта хастар та пуçаруллă библиотекарь сахал мар. Вĕсем тĕрлĕ конкурса хутшăнса çĕнтереççĕ, çапла майпа хăйсен професси пĕлĕвне те анлăлатаççĕ. 2014 çулта Сергий Радонежский преподобнăй çуралнăранпа 700 çул çитнине халалласа Наци библиотеки проект хатĕрленĕ, унпа килĕшӳллĕн Елчĕк районĕнче куçса çӳрекен выставка йĕркеленĕ. Тĕрлĕ ял тăрăхне çитнĕ çак курав. Аслă Таяпа ял тăрăхĕнче унпа çынсем чиркӳре паллашма пултарнă. Республикăри "Сергий преподобнăя пуç таятпăр" культура-вĕрентӳ форумне те хутшăннă вĕсем. Сергий Радонежские халалланă марафонра хастарлăх кăтартнăшăн районти тĕп библиотека ЧР культура министрĕн Вадим Ефимовăн Тав çырăвне тата Çветтуй Троица лаврине кайса курма 2 сертификата тивĕçнĕ. Кăçалах тĕп тата Аслă Пăла Тимеш ял библиотекисен пĕрлехи "Православи çути" проекчĕ "XXI ĕмĕр библиотеки" республика конкурсĕнче "Ял библиотеки" номинацире 1-мĕш вырăн йышăннă, вĕсене планшет тата çĕнĕ кĕнекесем парнеленĕ. Çавăн пекех районти вулавăшсен ĕçченĕсем тĕрлĕ ытти конкурса хутшăнса палăрнă.

Библиотекарьсем территорие тирпей-илем тата хăтлăх кĕртес енĕпе те пуçаруллă. "Вырăнти влаç пире лайăх пăхать, ĕçсемпе кăсăклансах тăрать, мероприятисене хутшăнать. Тавах вĕсене уншăн. Пирĕн коллектив пысăках мар, çапах питĕ туслă. Хамăрăн ĕçе юрататпăр. Юлашки вăхăтра ку тытăма çамрăксем килме пуçларĕç. Вĕсен шухăшлавĕ урăхларах, çĕннине хăвăртах алла илеççĕ", – каласа кăтартать Л.Зайцева.

Библиотекарьсем сывă пурнăç йĕркине кăмăллаççĕ. Акă, районти тĕп вулавăшра ĕçлекенсем кăçал октябрь уйăхĕнче "Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр" комплексăн нормативĕсене пурнăçланă. ГТО нормисене каялла тавăрма палăртнине ырласа йышăннă вĕсем.

2015 çул Раççейре – Литература çулталăкĕ, Чăваш Енре вара вăл К.В.Иванов ячĕпе иртет. Библиотекарьсем хатĕрленме пуçланă ĕнтĕ, вĕсен çĕнĕ шухăшсемпе идейăсем яланхи пекех тем чухлех. "Кун пек хастарсем ĕçленĕ чухне библиотека пур, пулать те", – çакăн пек пĕтĕмлетрĕм Елчĕкри тĕп библиотека ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă хыççăн.

> РАЙОНТА ХАСТАР ТА ПУÇАРУЛЛĂ БИБЛИОТЕКАРЬ САХАЛ МАР. ВĔСЕМ ТĔРЛĔ КОНКУРСА ХУТШĂНСА ÇĔНТЕРЕÇÇĔ, ÇАПЛА МАЙПА ХĂЙСЕН ПРОФЕССИ ПĔЛĔВНЕ ТЕ АНЛĂЛАТАÇÇĔ

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕ

# Çĕнĕ çул конкурсĕсем пурăнма хавхалантараççĕ

***Уяв çитнине туйма, хула Çĕнĕ çула тата çĕнĕ Çĕнтерӳсене кĕтсе илнĕ çĕре пĕрле хутшăнма Шупашкарсене Çĕнĕ çул конкурсĕсем пулăшĕç. «Çĕнĕ çул конкурсĕсем кирлех, вĕсем уяв чухнехи лару-тăрăва йĕркелеççĕ, пултарулăха тата хулан культура пурнăçне аталантарма, йăлăхтарса çитернине улăштарма, Шупашкар çыннисене хавхалану кӳме май параççĕ», – çапларах шухăшлать хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов.***

«Кăçал та эпир кунта пурăнакансене пурне те Çĕнĕ çул мероприятийĕсене хатĕрленсе ирттерес ĕçе явăçтарасшăн. Паян çĕнĕрен те çĕнĕ вырăнсене илемлетеççĕ, Республика тӳремĕнче Çĕнĕ çул ярмăрккипулĕ, анлă программа палăртнă. Пурне те çак пултарулăх ĕç-хĕлне хутшăнма чĕнетпĕр», – тет Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ **Алексей Ладыков.**

Кăçал хула çыннисем хăйсене тĕрлĕ енĕпе кăтартма пултараççĕ. Хĕллехи уяв Хĕл Мучине çырусем ямасăр иртĕ-и вара? Вĕсенче пĕчĕккисем хăйсен ĕмĕчĕсене палăртĕç, шухăшласа хунинчен нумайăшĕ пурнăçа кĕрет. Хулари вулавăшсенче **декабрĕн 25-мĕшĕччен «Хĕл Мучи почти»** ĕçлет. Пĕчĕккисене хĕллехи асамçăна çыру çырма кăна мар, 2014 çулхи çĕнтерĕвĕсем çинчен каласа кăтартма та сĕнеççĕ.

Хула администрацийĕ хĕллехи пысăк пулăма – **«2015 çула пĕрле утатпăр»** – хутшăнма заявкăсем малалла йышăнать. Кăмăл тăвакансем **декабрĕн 27-мĕшĕнче** Çĕнĕ çул персонажĕсен уявне хутшăнма пултараççĕ, чи лайăх Хĕл Мучи тĕп приз – Сочине каймалли путевка! – илĕ.

Конкурса хулара пурăнакансен çеç мар, вĕсен юмахри пек илемлетнĕ автомобилĕсен те хутшăнма май пур. Автомобильпе çӳреме кăмăл тăвакансене илемлетнĕ машинăсен **«Çĕнĕ çулхи АВТОКАРНАВАЛ»** конкурсне хутшăнма, Çĕнĕ çул автоколоннинче хула тăрăх ярăнма, тĕп приз – 500 литр бензин – выляса илме сĕннĕ.

Декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа хулара **2015 çулхи чи лайăх символ** хатĕрлемелли конкурс иртесси çинчен пĕлтернĕ. Скульптурăсене кирек мĕнле материалтан та тума пулать. Чи тивĕçлĕ ĕçсен авторĕсене призсемпе наградăлаççĕ.

**Хулари ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн «Раштав тĕррисем» II конкурс-фестивальне** илемлĕх, музыка тата ташă енĕсемпе ирттереççĕ.

**Илемлетнĕ чăрăшсен конкурсĕ** – хăйнеевĕрлĕ тата яланхи пек мар чăрăша палăртмалли конкурс. Ăна 8 çул ытла ирттереççĕ, унта хутшăнакансен йышĕ ӳссех пырать.

Республика тӳремĕнче **декабрĕн 28-мĕшĕнче хулари талантсен «Çĕнĕ çул çăлтăрĕсен фабрики» конкурсĕ** иртет. **«Хĕллехи тĕлĕнтермĕш»** фотоконкурсра çĕнтерекен цифрăллă фотоаппарат илме тивĕçлĕ пулĕ.

Хулара пурăнакан хаклă çыннăмăрсем! Пурне те Çĕнĕ çул уявĕ чухнехи лару-тăрăва «чăмма» чĕнетпĕр! Конкурссем çинчен тĕплĕнрех Шупашкар хулин администрацийĕн культура управленийĕн сайтĕнче http://tvorite.ru/ е 23-50-93 номерпе шăнкăравласа пĕлме пултаратăр.

**Шупашкар хула администрацийĕн культура управленийĕ.**

ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

# Икĕ чĕлхеллĕ хаçатăн тиражĕ ӳсмеллех

«Хыпар» хаçат тиражĕ вырăс пичет кăларăмĕнчен пĕчĕкрех пулни чăваш чунĕллĕ кашни çыннах пăшăрхантарать. Хуласенче пурăнакансен хушшинче аттеанне чĕлхипе вулакан сахалланса пынăран килет-ши çакă? Манăн шухăшăмпа, ялта сăлтавĕ кăшт урăхларах пек: хуçалăха тытса тăма, ачи-пăчине тумлантарма тата ытти валли укçа-тенкĕ сахал мар кирлĕ. Чылай çын ĕçе вырнаçаймасть. Çапах та ял халăхĕ пуçа усмасть-ха: малаллах талпăнать.

Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ В.Туркай хаçат шăпишĕн пăшăрханса çырнă статьяна чуна ыраттарса вуларăм. Шухăш пĕр килни хавхалантарчĕ те.

Мана пĕр вăхăт Хусанта вĕренме тӳр килчĕ. Ун чухне тутарсен «Татарстан яшьлэре» хаçат дубляжпа «Комсомолец Татарии» ятпа тухса тăратчĕ. Çав хаçатсене çамрăксем питĕ кăмăллатчĕç. Вырăсла куçарса пичетленĕ статьясене тутарсемпе пĕрле сӳтсе явни те сахал мар пулнă пирĕн.

Çӳлерех çырнине пĕтĕмлетсе çапла сĕнес килет: «Хыпар» хаçата «Весть» ятпа вырăсла та дубляж туса кăларма май çук-ши? Манăн шухăшăмпа кун пек тусан чăвашсен тĕп хаçачĕн тиражĕ ӳсмеллех. Ара, чăвашсен хушшинче тăван чĕлхепе вулама пĕлмен е ăнланман çын нумай. Вĕсем вырăслине кăмăлласси пирки иккĕленместĕп.

■ **Г.ИВАНОВ.**

Вăрнар районĕ,
Пăртас ялĕ

# Айăпа кĕрсен явап тытмаллах

***Шоркка ялĕнче футболла вылямашкăн лапама халăх кăçалхи пек нумай пухăннине астумастăп. Ача-пăча, яшсемпе хĕрсем, çитĕннисем сывă пурнăç йĕркине тытса пыни – аван пулăм. Çитменнине ялпа ял ăмăртас йăлана тытса пыни пушшех савăнтарать. Пархатарлă тĕллевпе иртекен мероприятире те кăмăла хуçакан самантсем пулни тарăхтарать.***

Сăмахăм – кукăр аласем "çывăрманни" пирки. Акă çапла пĕринче вăйă вăхăтĕнче К. П. телефонĕ çухалнă. Хăй каланă тăрăх – вылянă чухне ан чăрмантартăр тесе вăл ăна футбол хапхин юпи çумне хурать. "Уралаиннă" телефона çийĕнчех шырама пуçлаççĕ. Шупашкар районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем асăннă тăрăхра пурăнакансемпе кунĕпе те çĕрĕпе тĕпчев ирттереççĕ. Тимлĕ ĕçлени харама кайман: вăрра тупнă. Шкула çӳрекенскер Шоркка ялне футбол вылянине курма ют ялтан ятарласа килнĕ иккен. "Хуçасăр" япалана асăрхасан нумай шухăшласа тăман – кĕсйине чăмтарнă.

Хальхи саманара ача-пăчана илĕртмелли техника çав тери йышлă. Чăн та, чылайăшĕ вăхăтпа тан утма хăтланса кивелменçĕмĕрĕлмен телефонах, сăмахран, çĕнĕрех модельлипе улăштарма хăтланать. Çакăн пирки, паллах, ашшĕ-амăшне тилмĕрет. Пурнăçа аран сыпăнтарса пыракан çемьере çитĕнекен шăпăрланăн камран парне кĕтмелле? Юлташĕсен умĕнче "чăнкă" телефонпа унăн та мухтанас килет-çке.

Паллах, çак сăмахсене йăнăш çул çине тăракансене тӳрре кăларас тĕллевпе çырмарăм. Ашшĕ-амăшне хăйсен тĕпренчĕкĕпе тимлĕрех пулма, тĕрĕс мар утăмсенчен пĕрле сыхланма сĕнетĕп. Çул çитмен ача кирек мĕнле йăнăш тусан та яваплăх аслисем çинчеçке. Апла пулин те йĕркене пăсаканăн хăйĕн те явап тытмаллах. Акă хам каласа кăтартнă тĕслĕхшĕнех 3800 çул каялла Вавилон çĕршывĕнче Хаммурапи патши саккунĕпе е хăлха, е алă татма пултарнă. Телее, паян эпир этеме майлă саманара пурăнатпăр. Апла тăк чикĕрен иртмелле маррине пушшех ăнланмалла, чухламалла.

■ **Николай ПЛАТОНОВ.**

Шупашкар районĕ

# Ытларах çырасчĕ

Çитес çул Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитет. Фронтпа тыл пĕрлĕхĕ çирĕп пулни çав куна çывхартма пулăшнă та. Синкерлĕ тапхăрта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех ял Канашĕсен ĕçтăвкомĕсем те кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ, вĕсем çапăçакан салтаксене апат-çимĕçпе, ăшă çипуçпа, ытти кирлĕ япалапа ытлăн-çитлĕн тивĕçтерсе тăма тăрăшнă.

Манăн «Вырăнти хăйтытăмлăх» кăларăмра вырăн тупакан статьясенче манăçми çулсенче тăрăшуллă та пуçаруллă ĕçлесе пынă ял Канашĕсен ĕçтăвкомĕсен ертӳçисемпе яваплă çыннисем çинчен тĕплĕнрех пĕлес килет. Çавна май халĕччен вулакансем кăмăлласа йышăнса пынă кăларăмра «Вĕсем Çĕнтерӳшĕн ĕçленĕ» ярăм уçма сĕнесшĕн. Паллах, ăна урăхла ят та пама пулать. Ĕçĕхĕлĕ унта мар, чи кирли акă ăçта: паянхи çамрăксем çав тапхăрти лару-тăрăва, темĕнле кăткăслăхра та халăх шанăçне тивĕçнĕ çынсем хăйсен чун çирĕплĕхĕпе чăтăмлăхне çухатмасăр ентешĕсене Çĕнтерĕве çывхартма пулăшнине лайăх пĕлсе тăма пултарччăр. Ĕçтăвкомсене ертсе пынă, хаяр вăрçăра пуçĕсене хунă паттăрсем çинчен те ытларах çырасчĕ.

■ **Михаил ВАСИЛЬЕВ, ветеран.**

Канаш районĕ,
Йăлмаччă ялĕ

# Пассажиршăн меллĕрех пулĕччĕ

Тĕп хуларан Кĕçкее çити автобус виçĕ рейс тăвать. Услă Пукаш пуçне пырса каять, Хуракасси витĕр тухать, Васлекасси, Нарат Чакки çумĕсемпе иртсе Карапаша та пырать. Автобус водителĕсем пассажирсемпе кăмăллăн калаçаççĕ. Хăйсем те ку тăрăхранах. Сăмахран, Николай Колбасов Çĕньял Пукашран.

Коммерци автобусĕ чукун çул вокзалĕпе çуммăнах вырнаçнă хула çум вокзалĕнчен тапранса тухни, шел те, чылай пассажиршăн меллех мар. Пирĕн тăрăхрисемшĕн – Октябрьски, Аксарин, Хуракасси енчисемшĕн – хула çум автовокзалĕн тĕп çурчĕ территорийĕнчен çула тухас тăк питĕ меллĕ: кирек хăш автобуспа кайма та билет пур. Çул çӳрекенсене тепĕр ыйту та канăçсăрлантарать: автобуссем тĕрлĕ чарăнура миçере пулассин графикĕсем çук. Транспорт хуçалăхĕнче ĕçлекенсен кашни чарăнурах павильон кирлине те /çумăрта, çил-тăманра хӳтлĕхсĕр епле-ха/ шута илсе мерăсем йышăнмалла.

■ **А.ШОКЛЕВ.**

Сĕнтĕрвăрри районĕ

ПЕНСИ ФОНЧĔН ХЫПАРĔСЕМ

# Социаллă программăсем валли – тата 13 млн тенкĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пуçарнипе Социаллă программăсене финансламашкăн укçа-тенкĕ ытларах уйăрма палăртнă. Шăмăршă районĕнчи социаллă ыйтусене тивĕçтерекен центрăн вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмĕн çурчĕн строительствине вĕçлемешкĕн тата 13 млн тенкĕ куçарнă. Социаллă программăна укçа-тенкĕпе РФ Пенси фончĕпе Чăваш Республикин Правительстви çурмалла тивĕçтернĕ май çак суммăна республика бюджетĕнчен уйăрнă.

2014 çулта РФ Пенси фончĕ Чăваш Республикин Социаллă программине пурнăçламашкăн 15,6 млн тенкĕ хывнă. Шăмăршă районĕнчи центрсăр пуçне аслă ăру çыннисен "Вега" сиплев центрне, Муркаш районĕнчи социаллă ыйтусене тивĕçтерекен центра тата Кӳкеçри ача-пăча интернат çуртне тĕпрен юсамашкăн нухратпа пулăшнă.

Раççей Пенси фончĕ регионсен социаллă программисене вĕсен бюджетĕнчен пĕрешкел виçепе уйăрмалли условие тĕпе хурса 2000 çултанпа финанслать. Асăннă тапхăрта вăл пирĕн республикăри пулăшу учрежденийĕсен пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетмешкĕн тата юсамашкăн 270 млн тенкĕ уйăрнă.

# Пулăшу çулсерен анлăланать

Амăшлăхпа ачалăха патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтермелли мелсем çулсерен анлăланса пыраççĕ. Тĕслĕхрен, çĕнĕ саккунсемпе килĕшӳллĕн ачана 1,5 çула çитиччен пăхнă тапхăра пенси валли кирлĕ страховани стажне 4,5 çул таран кĕртеççĕ. 2015 çултан ку хисепе 6 çула çитереççĕ. Унсăр пуçне çак вăхăтшăн çулталăкри уйрăм коэффициентсем палăртаççĕ. Вĕсен виçи çут тĕнчене килнĕ кашни пепкешĕн ӳссе пырать: иккĕмĕшĕшĕн – 2 хут, виççĕмĕшĕпе тăваттăмĕшĕшĕн – 3 хут. Çапла вара тăватă ача çуратса вĕсене пăхмашкăн пĕтĕмпе 6 çул отпуск илнĕ амăшĕн 28 пин тенкĕллĕ шалупа танлашакан 24 коэффициент пухăнать. Икĕ е унран ытларах ачаллă, Çурçĕр регионĕсенче – 12, çав вырăнсемпе танлаштарнă çĕрте 17 календарлă çулталăкран кая мар ĕçленĕ 200-е яхăн хĕрарăм республикăра пенсие 50 çултах тухнă.

Сусăр ачана е ачаранпах пĕрремĕш ушкăн инваличĕ шутланакансен ĕçлемен амăшĕсене уйăхсерен паракан укçа виçине РФ Президенчĕн Указĕпе 2013 çултан ӳстернĕ, 1200 тенкĕрен 5500-е çитернĕ: Чăваш Енре 2,9 пин ашшĕ-амăшĕ тата опекун асăннă компенсацие илсе тăрать.

Ачаллă çемьесене пулăшмалли патшалăх программипе килĕшӳллĕн амăшĕн капиталĕн сертификатне республикăра 2007 çултан 56 пин ытла çемье тивĕçнĕ, вĕсенчен 32 пинĕшĕ çав шутпа хваттер условийĕсене лайăхлатнă, 1 пинĕшĕ аслă ачисене институт-университетра вĕрентнĕшĕн тата тĕпренчĕкĕсене садике çӳретнĕшĕн тӳленĕ – кун пек чухне федераци бюджетĕнчен уйăракан патшалăх пулăшăвĕ 11,1 млрд тенкĕпе танлашнă.

Аса илтеретпĕр: çемье капиталĕн сертификатне тивĕçмелли тата унпа усă курмалли ирĕке иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана 2016 çулхи декабрь уйăхĕн 31-мĕшĕччен çуратсан е усрава илсен параççĕ.

■ **В.СМИРНОВА**

ПРЕЗЕНТАЦИ

# Палăкпа танлашакан кăларăм

***Хамăр республикăри хаçат-журналта ĕçлекенсем çинчен ятарлă кăларăмсем малтан та пичетленнĕ-ха. 2005 çулта "Журналисты Чувашии" кĕнеке тухнăччĕ, тепĕр икĕ çултан – "Городские и районные газеты Чувашии". Кăçал вара тата сумлă тепĕр ĕç – "Энциклопедия чувашской журналистики и печати" – кун çути курчĕ. Иртнĕ эрне вĕçĕнче Чăваш наци библиотекинче шăпах унăн презентацийĕ пулчĕ те.***




Кунашкал энциклопеди регионсенче урăх çук тесе калама пултараймастăп, анчах та ЧР Журналистсен союзĕн председателĕ Валерий Комиссаров çине тăнипе пурнăçа кĕнĕ проектăн пĕлтерĕшĕ вышкайсăр пысăк. Кунта – республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен, издательствăсен, полиграфи предприятийĕсен, информаци агентствисен кун-çулĕн, аталанăвĕн тĕп тапхăрĕсем, СССР тата Раççей Журналистсен союзĕсен членĕсен биографийĕсем. Энциклопедирех чăваш кăларăмĕсен пĕрремĕш редакторĕсем, репрессие лекнĕ журналистсем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă корреспондентсем, Чăваш Ен массăллă информаци хатĕрĕсен ертӳçисемпе унта ĕçлекенсем çинчен те вуласа пĕлме пулать. Кĕнекере çавăн пекех республика тулашĕнче тухса тăракан чăваш хаçачĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе те паллаштарнă.

Кĕнекене 2400 яхăн статья, 1400 яхăн сăнӳкерчĕк вырнаçтарнă.

Мероприятие ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Александр Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн комитет ертӳçи Петр Краснов, пичет ветеранĕсем хутшăнчĕç. Александр Степанович энциклопедие пысăк хак пачĕ, Чăваш Ен журналисчĕсен ĕçĕ историе тарăн йĕр хăварнине палăртрĕ. Министр çавăн пекех авторсен ушкăнне тав турĕ, Министерствăн Хисеп грамотипе ЧР Журналистсен союзĕн бухгалтерне Наталия Николаевăна наградăларĕ.

Петр Краснов та пушă алăпа пыман. Вăл республикăри Журналистсен союзне ЧР Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотипе чысларĕ.

Чăваш журналисчĕсен ĕçне Раççей Журналистсен союзĕнче те асăрханă. Энциклопеди хатĕрлес тĕлĕшпе хастарлăх кăтартнисене – Владимир Зырянова, Надежда Осиповăна, Елена Егоровăна тата чăваш пичечĕн ветеранне Демьян Семенова – союзăн "Профессионал пĕрлĕхĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" Хисеплĕ паллине пачĕç. Раççей Журналистсен союзĕн Хисеп грамотине тивĕçнисем те чылайăн пулчĕç.

Энциклопеди пĕлтерĕшĕ, ăна хатĕрленĕ ушкăнăн пултарулăхĕ çинчен хăйсен шухăшĕсене Наталья Володина журналист, Лев Кураков академик, Юрий Исаев ăсчах, Сергей Павлов журналист-писатель тата ыттисем те пĕлтерчĕç. Манăн чылай çул Чăваш Республикинчи Журналистсен союзне ертсе пынă Демьян Семеновăн сăмахĕсемпе питĕ килĕшес килет: "Асăннă кăларăм – чăваш журналисчĕсен ячĕпе çĕкленĕ палăк". Вĕсем ăна хăйсен хăюлăхĕпе, хастарлăхĕпе, ăсталăхĕпе, пултарулăхĕпе тивĕçнĕ.

■ **Надежда СМИРНОВА**



